25-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
21
ШАМАТКУН
271 (6206) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

СССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕпе СССР Наркомземĕн Политуправленийĕнче

ССР Союзĕн Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕпе СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ, вăйлă тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене облаҫсем, крайсем тата республикăсем тăрăх пăхса тухса, ăмăрту условийĕсемпе килĕштерсе, **Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕҫлĕ кандидатсем** тесе ҫак облаҫсемпе крайсене тата республикăсене йышăннă, — вĕсем тырпула чи ăнăҫлăрах пухса кĕртнĕ тата кĕрхи тырăсем акмалли ҫĕр лаптăкне, 1941 ҫултипе танлаштарсан, чылай анлăлатнă:

1. Калинин облаҫĕ
2. Мускав облаҫĕ
3. Ленинград облаҫĕ
4. Приморье крайĕ
5. Казах ССР-ĕ
6. Новосибирск облаҫĕ
7. Горький облаҫĕ
8. Иркутск облаҫĕ
9. Свердловск облаҫĕ
10. Туркмен ССР-ĕ
11. Таджик ССР-ĕ

Ҫак облаҫсемпе крайсем тата республикăсем хирти ĕҫсене ăнăҫлăн туса ирттернипе пĕрлех тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе те лайăх тĕслĕхсем кăтартнă.

* * *

СССР Наркомземĕпе СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫе малалла ҫĕклессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн виҫĕ кварталти итогĕсене пăхса тухса, ăмăрту условийĕсем тăрăх, **Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕҫлĕ кандидатсем** тесе выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ӳстерес тĕлĕшпе чи лайăх результатсем кăтартнă ҫак облаҫсемпе крайсене тата республикăсене йышăннă:

Республикăсем, крайсем тата облаҫсем	Вылăхьсен хисепĕ 1942 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕн чухлĕ пулнине танлаштарса процентпа шутласан 1942 ҫулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ҫакăн чухлĕ ӳснĕ		
	Мăйракаллă шултра выльăхсем	Сурăхсемпе качакасем	Сыснасем
Казах ССР-ĕ	115,6	125,1	144,3
Иваново облаҫĕ	146,5	172,1	181,8
Чăваш АССР-ĕ	133,2	151,8	154,8
Мари АССР-ĕ	133,0	141,2	140,6
Таджик ССР-ĕ	129,7	125,7	102,7
Ярославль облаҫĕ	128,0	150,5	155,6
Горький облаҫĕ	127,1	139,2	155,9
Удмурт АССР-ĕ	121,2	141,7	134,4
Молотов облаҫĕ	119,0	136,6	132,0
Киргиз ССР-ĕ	118,2	120,2	112,1
Приморье крайĕ	116,9	133,6	138,2

Ҫак облаҫсемпе крайсем тата республикăсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе паха результатсем тунипе пĕрлех, тырпулсене пухса кĕртес ĕҫе те ăнăҫлăн туса ирттернĕ тата кăҫалхи ҫул кĕрхи тырăсем акмалли ҫĕр лаптăкне анлăлатнă.

ССР Союзĕн Наркомземĕпе СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе 1942 ҫулхи виҫĕ квартал хушшинче лайăх ĕҫленĕ тесе Калинин, Мускав тата Тула облаҫĕсене палăртнă.

ВЦСПС-па СССР Наркомземĕнче тата СССР Наркомземен Политуправленийĕнче

ВЦСПС-па СССР Наркомземĕ тата СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ, МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, ăмăрту условийĕсемпе килĕштерсе, **Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕҫлĕ кандидатсем** тесе ҫак облаҫсемпе крайсене тата республикăсене йышăннă, — вĕсем МТС-сен тракторĕсемпе ĕҫлемелли государство планне пурнăҫа кĕртнĕ ҫĕрте чи лайăх тĕслĕхсем кăтартнă, кашни тракторпа питех те тухăҫлăн ĕҫленĕ, тырпулсене ăнăҫлăн пухса кĕртнĕ, кĕрхи тырăсене лайăх акса хăварнă, горючи чылай перекетлесе хăварнă:

1. Мускав облаҫĕ
2. Приморье крайĕ
3. Чăваш АССР-ĕ
4. Тула облаҫĕ
5. Армян ССР-ĕ
6. Туркмен ССР-ĕ
7. Таджик ССР-ĕ

Кусемсĕр пуҫне, ВЦСПС-па СССР Наркомземĕ тата СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ ҫак облаҫсемпе республикăсем лайăх ĕҫленине палăртать:

1. Ленинград облаҫĕ
2. Горький облаҫĕ
3. Коми АССР-ĕ

Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕҫлекен Комитетсенче

Наукăпа изобретательство енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕҫлекен Комитет тата литературăпа искусство енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕҫлекен Комитет Сталинла премисем пама тивĕҫлĕ кандидатсене ҫĕнĕрен суйласа илес ĕҫе тытăннă.

Кăҫалхи ҫул Сталинла премисене наукăри питех те палăрса тăракан ĕҫсемшĕн, чаплă изобретенисемшĕн, производствăллă ĕҫĕн меслечĕсене тĕпрен ҫĕнетсе лайăхлатнăшăн тата литературăпа искусствăри питех те палăрса тăракан произведенисемшĕн, 1942 ҫулта туса ҫитернĕскерсемшĕн, ҫавăн пекех тата 1941 ҫулхи октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуҫласа 1942 ҫулхи январĕн 1-мĕшне ҫитиччен туса ҫитернĕскерсемшĕн, параҫҫĕ.

Сталинла премисем парасси ҫинчен калакан сĕнӳсене, научнăй ĕҫсемпе пĕрле е изобретенисем ҫинчен тата производствăллă ĕҫĕн меслечĕсене ҫĕнетсе лайăхлатни ҫинчен кăтартса ҫырнисемпе пĕрле, ҫавăн пекех тата литературăпа искусство произведенийĕсемпе пĕрле, наукăпа изобретательство енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕҫлекен Комитета ҫак адреспа ямалла: Мускав хули, Рождественка, 11-мĕш №-лĕ ҫурт, литературăпа искусство енĕпе Сталинла премисем парас тĕлĕшпе ĕҫлекен Комитета вара ҫак адреспа ямалла: Мускав хули, Пушкинская урам, 24-мĕш №-лĕ ҫурт. (ТАСС).

Юлашки сехетре

Владикавказ (Орджоникидзе хули) районĕнче нимĕҫсен фашистла войскисен группине пырса ҫапни

Владикавказ (Орджоникидзе хули) патне пымалли вырăнсенче темиҫе кун хушши пынă ҫапăҫусем нимĕҫсене арк атса тăкнипе вĕҫленнĕ.

Ҫав ҫапăҫусенче пирĕн войскăсем нимĕҫсен 13-мĕш танковăй дивизине, «Бранденбург» ятлă полкне, 45-мĕш велобатальонне, 7-мĕш сапернăй батальонне, противотанковăй оборонăн 525-мĕш дивизионне, нимĕҫсен 1-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕн батальонне тата 336-мĕш уйрăм батальонне аркатса тăкнă. Нимĕҫсен 23-мĕш танковăй дивизине, румынсен 2-мĕш горно-стрелковăй дивизине тата противникăн ытти чаҫĕсене те пысăк ҫухатусем тӳстернĕ.

Пирĕн войскăсем нимĕҫсенчен 140 танк, 7 бронемашина, тĕрлĕ калибрлă 70 оруди, ҫав шутра инҫе перекен 36 оруди, 95 миномет, ҫав шутра ултă кĕпҫеллĕ 4 миномет, 84 пулемет, 2.350 веломашина, 183 мотоцикл, пĕр миллион ытла патрон, боеприпассен икĕ складне, продовольстви складне тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ.

Ҫапăҫу хирĕнче нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсен 5 пин вилли ытла выртса юлнă. Аманнă нимĕҫсен хисепĕ вилнисен хисепĕнчен темиҫе хут пысăкрах.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 19-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Туапсерен** ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнерехре ҫапăҫнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕҫсен 5 танкне тата войскăсем турттарса пыракан 20 автомашинине ҫити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, противник пехотине икĕ рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникпа ҫапăҫнă. Хулан ҫурҫĕр енчи пайĕнче нимĕҫсен пехотипе танкĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн пехотинецсем, артиллеристсем тата минометчиксем гитлеровецсен ултă атакине сирсе янă. Ҫак ҫапăҫура нимĕҫсен 11 танкне персе ҫĕмĕрнĕ, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 800 ҫынна ҫити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра противник темиҫе хут атакăланă хыҫҫăн, пысăк ҫухатусем тӳссе, темиҫе ишĕлнĕ ҫурта йышăнса илнĕ.

Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕҫсен 8 самолетне ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран ҫурҫĕр-хĕвеланăҫнерехре Глебов юлташ командир пулса тăракан чаҫăн артиллерисчĕсем сасартăк вăйлăн пере-пере ярса 3 автомашинăна, 4 пулеметнăй точкăна тата противникăн 50 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Чаплыгин ертсе пыракан разведчиксен группи тăшман оборонин малти хĕрри патне пырса тухнă та темиҫе окопа ҫаварса илнĕ.

Пирĕн боецсем 19 гитлеровеца штыкпа чиксе вĕлернĕ тата темиҫе нимĕҫе тыткăна илнĕ. Унтан, хĕҫпăшалсене пухса илсе, пирĕн разведчиксем хăйсен чаҫне таврăннă.

* * *

Моздок районĕнче противник ĕнер пирĕн оборонăна татас тесе тунă атакисем ăнăҫман пирки паян активлăх кăтартман. Тĕрĕсрех палăртнă тăрăх, пулса иртнĕ ҫапăҫусенче нимĕҫсен 17 танкне мар, 38 танкне персе ҫĕмĕрнĕ е ҫунтарса янă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 ҫынна ытла пĕтернĕ.

* * *

Туапсерен ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнерехре пирĕн войскăсем хăйсен малтанхи позицийĕсенчех тăнă, вĕсем противникăн вак групписен атакисене сире-сире янă. Гордеев юлташ ертсе пыракан чаҫăн боецĕсем противникăн атакине сирсе ярса, гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. 5 миномет, 17 пулемет тата 2 родиостанци тытса илнĕ.

* * *

Ҫурҫĕр-хĕвеланăҫ фронтĕнче сайра-хутран артиллерирен хире-хирĕҫ персе тăнă. Ужански юлташăн подразделенийĕнчи артиллеристсем тăшманăн 105 миллиметрлă орудисен батарейине пĕтерсе тăкнă. Кĕҫĕн лейтенант Укладчиков ертсе пыракан боецсен группи противникăн тылне кĕрсе кайнă та ҫул патĕнче засада тунă. Часах ҫав ҫул ҫинче нимĕҫсен пехотин колонни курăнса кайнă. Разведчиксем вĕсем ҫине персе 15 гитлеровеца вĕлернĕ те пĕр ҫухатусăрах хăйсен чаҫне таврăннă.

* * *

Витебск облаҫĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн поездне сирпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, 4 вагон тата 14 платформа ҫĕмĕрĕлнĕ. Крушени вăхăтĕнче 60 нимĕҫ салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Минск облаҫĕнчи партизансен ушкăнĕ нимĕҫсен фашистла оккупанчĕсен карательнăй отрядне ҫапса аркатнă. Ҫакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: грузовой тата ҫăмăл автомашина, мотоцикл, 15 винтовка, 5.000 патрон тата продовольстви нумай тытса илнĕ. Партизансем гитлеровецсем арестленĕ совет патриочĕсене нумай ҫынна ирĕке кăларнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăҫнерехре вĕлернĕ нимĕҫ салтакĕ Иозеф Копач ҫумĕнче ун патне Судет облаҫĕнчен ҫырнă ҫырăва тупнă. Ҫав ҫырура ҫапла каланă: «...Чехире тата икĕ яла ҫĕрпе танлаштарса хунă. Ҫав ялсенчи ҫынсем пурте саботаж тăвас ĕҫе хутшăннă пулнă. Нумаях пулмасть Прагăра виҫĕ священника тата пĕр епископа арестленĕ».

* * *

Плоэштири (Румыния) нефть промыслисенче юлашки вăхăтра темиҫе пушар тухнă. Нефть продукчĕсемпе оборудовани нумай пĕтнĕ. Ҫавна пула нумай ҫынна арестленĕ. Нефть промыслисене сыхлама Германирен гестаповецсен специальнăй отрячĕсем пынă.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пĕр участокра противникăн пехотипе танкĕсем пирĕн икĕ часть тăракан вырăнсем хушшине кĕрсе кайнă пулнă. Кĕҫĕн лейтенант Калинин ертсе пыракан боецсем тăшманпа ҫапăҫма тытăннă та хаяр тытăҫура 170 гитлеровеца тата нимĕҫсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Ҫав участокра лару-тăру вара каллех унччченхи пекех пулса тăнă. Бездидько лейтенант ертсе пыракан минометчиксем темиҫе кун хушшинче нимĕҫсен 4 минометнăй батарейине, 2 орудине, 7 автомашинине, радиостанцине тата противникăн пехотине икĕ рота таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран ҫурҫер-хĕвеланăҫнерехре Н-ски чаҫăн артиллерисчĕсем противникăн войскăсем ларса пыракан автоколонни ҫине, фронт патне ҫывăхарса пыраканскер ҫине, сасартăк вăйлăн пеме тытăннă. 7 автомашинăна тата темиҫе вуншар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаҫăн разведка тăвакан отрячĕ ҫĕрле противникăн тылне кĕрсе кайнă та халăх пурăнакан пĕр пунктра вырăнаҫнă румынсен батальонне тапăннă.

Пирĕннисем пеме тытăнсанах румынсем ҫухалса кайнă. Ҫавăнпа усă курса, пирĕн разведчиксем противникăн 100 салтакĕпе офицерне ҫити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнерехре пирĕн чаҫсем хăйсен рубежĕсене ҫирĕплетнĕ тата противникăн вак групписемпе ҫапăҫнă. Н-ски чаҫăн Михеев сержант ертсе пыракан подразделенийĕ нимĕҫсен боевой охраненине тапăннă. Штык вĕççĕн ҫапăҫса 60 гитлеровеца ҫити пĕтерсе тăксан, пирĕн боецсем пĕр пулеметпа темиҫе винтовка тытса илнĕ те пĕр ҫухатусăрах хăйсен чаҫне таврăннă.

* * *

Волхов фрончĕн пĕр участокĕнче разведка тĕлĕшпе паха операци туса ирттернĕ. Темиҫе кун каялла пирĕн часть противника атакăласа, нимĕҫсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хăваласа кăларни ҫинчен пĕлтернĕччĕ. Гитлеровецсен ҫапăҫăва пысăк вăйсем кĕртсе яма тивнĕ. Тăшманăн контратакине ăнăҫлăн сирсе ярса, пирĕн боецсем виҫĕ кун хушшинче противникăн 5.000 салтакĕпе офицерне ҫити пĕтерсе тăкнă. Ҫав ҫапăҫусенче 11 оруди, 3 миномет пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 19 батарейине тата минометсен 7 батарейине пусарса лартнă. Разведка тăвас тĕлĕшпе лартнă тĕп задачăсене пурнăҫланă хыҫҫăн пирĕн часть командовани приказĕ тăрăх хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне каялла таврăннă.

* * *

Смоленск облаҫĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн 3 поездне ӳпĕнтерсе янă. Виҫĕ паровоз, 23 вагон, 8 платформа тата горючи тултарнă 2 цистерна ҫĕмĕрĕлнĕ. Засадăран персе, партизансем 80 нимĕҫ салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Курск облаҫĕнчи Суджа хулинче гитлеровецсем ирĕксĕрле ĕҫрен тарнă 5 хĕрарăма ҫакса вĕлернĕ. Дмитровск хулинче нимĕҫсен фашистла ирсĕрĕсем шкула ҫӳремелли 8 ачана персе вĕлернĕ, вĕсене «Германи ҫарĕ ҫинчен ăна хисеплемесĕр каланă» пирки персе пăрахнă. 12 ҫулхи Ильина нимĕҫсем вăл урамра нимĕҫ офицерне тĕл пулсан ҫĕлĕкне хывманшăн персе вĕлернĕ.

* * *

Дрезденри (Германия) ҫар заводĕнче Италирен килнĕ рабочисем хумхана пуҫланă. Хăйсене мăшкăлланипе тарăхса ҫитсе, итальянецсем хăйсене ĕҫрен кăларма тата киле яма ыйтнă. Администраци вĕсем ыйтнине пурнăҫа кĕртме килĕшмесен, итальянецсем ĕҫлеме пăрахнă. Ҫав завода пырса ҫитнĕ эсэсовецсем 5 итальянец рабочине персе вĕлернĕ.

Ăмăртса ĕҫленипе

ЕТĔРНЕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри промысла коопераци артелĕсен ҫак ҫулхи октябрьти социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Пушнарти Чкалов ячĕпе тăракан артеле лайăх ĕҫленĕ тесе палăртнă. Вăл артель Етĕрнери **Сталин ячĕпе тăракан** артельпе ăмăртать. Вăл **ăмăртура малта** пырать: иртнĕ уйăхри производство планне 137 процент тултарнă.

Н. РЫБАКОВ.

Авăн ҫапса пĕтермелли ҫирĕмкунлăх

Колхозниксен ҫирĕп сăмахĕ

Мыслецри «Ударник» колхозăн членĕсем хăйсен упăшкисемпе пиччĕшĕсене тата ывăлĕсене фронта ăсатса янă чухне ҫапла каланă: тăшмана ним хĕрхенмесĕр ҫапăр, вĕлерĕр, эпир кунта мĕн пур вăя хурса ĕҫлесе, сире пулăшса тăратпăр, тенĕ. Вĕсем фронта каякансене ҫĕнтерӳ туса таврăнма сывлăх суннă.

Фронтовиксен ывăл-хĕрĕсем, ашшĕ-амăшĕсем хăйсен сăмахĕсене пурнăҫа кĕртсе пыраҫҫĕ. Вăл колхоз ĕҫĕнче уйрăмах уҫҫăн палăрать. Ытти ҫулсенче кая юлса пынă колхоз халь районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать.

Акă ĕҫĕн хăшпĕр результачĕсем: «Ударник» колхоз кăҫал уйри тырпулсене пурне те срокра тата пĕр тăккаламасăр пуҫтарса кĕртрĕ, вăхăтра ҫапса пуҫтарчĕ. Ҫавăн пекех пахча-ҫимĕҫсемпе ҫĕрулмине те вăхăтра пуҫтарчĕ. Кашни колхозник обязательнăй йĕркепе тумалли ĕҫкунĕсен минимумне тултарса пырать.

Анна Иванова 62 ҫулта. Унăн икĕ ывăлĕ отечественнăй аслă вăрҫă фрончĕсенче гитлерла захватчиксемпе ҫапăҫаҫҫĕ. Вăрҫăччен Анна Иванова колхоз ĕҫне вăхăтран вăхăта кăна тухкаланă, мĕншĕн тесен вată колхозницăн ывăлĕсем ун чухне колхозра ĕҫленĕ, вĕсем стахановла ĕҫленĕ. Сахал пулнă-и ун пеккисем колхозра?!

Ватă колхозница кăҫал пур ĕҫе те хутшăннă, уйхир ĕҫĕнчен вăл пĕр кун та юлман. Вăл кăҫ тарнччен 322 ĕҫкунĕ тунă.

Нумаях та пулмасть колхоз членĕсем аслă ҫулпуҫăн Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 ҫул тултарни ҫинчен тунă доклачĕпе паллашрĕҫ. Колхозниксем ҫулпуҫ докладне чĕререн ырларĕҫ, ăна большевикла ĕҫпе ответлеме пулчĕҫ.

Халĕ колхозра хĕрӳллĕ ĕҫ пырать. Колхоз государство умĕнчи чылай обязательствăсене парса татрĕ ĕнтĕ. Ҫак кунсенче 25 центнер йĕтĕн сӳсĕ, 7 центнер аш-какай леҫсе пачĕ. Колхозниксем те аш-какай, сĕт-ҫу, ҫăмарта, ҫăм памалли обязательствăсене ытлашшипех парса татрĕҫ.

Пилĕк колхозник ҫывăхри чугунҫул линиҫинче ĕҫлет, 2-шер колхозник «Большевик» заводпа комбината вутă турттараҫҫĕ, 5—6 колхозник вăрман хатĕрлевĕнче. Пурте вĕсем хăйсене шанса панă участоксенчи ĕҫе тăрăшса туса пыраҫҫĕ

Х. ЛИСИН.

ҪĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.)**

Вăрлăхлăх курăксене халех пуҫтарса кĕртмелле

Республикăри нумай районсем кăҫалхи тырпулсене тата вăрлăхлăх акса ӳстернĕ курăксене вăхăтра тирпейлĕн пуҫтарса кĕртрĕҫ. Ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне республикăри 25 район уборка ĕҫĕсене пĕтĕмĕшпех вĕҫленĕ, тырпулсемпе пĕрле вăрлăхлăх курăксене те кая юлмасăр пуҫтарса кĕртнĕ. Халĕ, фронтри пек ĕҫлемелли ҫирĕмкунлăхра, тырпулсене хăвăрт ҫапса пынипе пĕрлех, хăшпĕр районсем курăксен вăрлăхне ҫапса илес ĕҫе те тимлĕн туса пыраҫҫĕ. Улатăр районĕнчи колхозсем вăрлăхлăх акнă клеверăн 33,3 процентне, Ишлей районĕ — 37 процентне, Ҫĕрпӳ районĕ — 28 процентне ҫапса илнĕ.

Анчах та республикăри виҫĕ район — Куславкка, Октябрьски тата Тăвай районĕсем — вăрлăхлăх акса ҫитĕнтернĕ курăксене паянхи куна ҫитсе те уйран пуҫтарса кĕртмен. Ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне илнĕ даннăйсем тăрăх, Куславкка районĕнчи колхозсен уйхирĕнче ҫулса пуҫтарман вăрлăхлăх клевер 74 гектар, Октябрьски районри колхозсен 26 гектар, Тăвай районĕнчи колхозсен 24 гектар ларать. Ҫапла ĕнтĕ ҫак районсем ку таранччен те уборка ĕҫĕсене вĕҫлемен пулать. Ҫакă вăл СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 ҫулхи тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлесе парасси ҫинчен» йышăннă постановление ҫав районсем пăснине пĕлтерет.

Клевер вăрлăхе — хаклă япала. Ăна хамăрăн уйхирсенче ытларах акса, эпир тырпулăн тухăҫлăхне нумай ӳстеретпĕр, вăл ытти тырăсене ăнăҫлăн ӳсме пулăшать. Клевера пирĕн ҫитес ҫулсенче татах та ытларах акмалла пулать. Ҫавăнпа та клевер вăрлăхне кашни колхозăн нумайрах туса илмелле, ăна килес ҫул акмалăх та, государствăна сутмалăх та хатĕрлемелле.

Куславкка, Октябрьски тата Тăвай районĕсенчи колхозсен ку тĕлĕшпе хаяюлса пынине халех пĕтермелле

Выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноҫне ӳстерессишĕн

ВĂРНАР. Районри нумай колхозсем кăҫал выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ӳстерессишĕн, кашни ҫамрăк выльăха тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ҫитĕнтерессишĕн, выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноҫне вăйлăн хăпартассишĕн тимлĕн кĕрешрĕҫ.

Хорнсорти колхозăн ĕне ферминче ĕҫлекенсем Стеклова тата Тяхмусова юлташсем хăйсем пăхакан 26 ĕнерен кашниченех тĕреклĕ пăрусем илсе пăхса ҫитĕнтернĕ. «Волга» колхозра А. Иванова колхозница фермăри 49 сурăхран кăҫал 123,9 килограмм ҫăм илнĕ. Ҫавăн пекех Тюлюккассинчи тата Хорнсорти колхозсенче те П. Николаева, Н. Коновалова юлташсем фермăсенчи сурăхсенчен ҫăм илес плана 116 процент ытла тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕхрен тупăш ытларах илесси вĕсене лайăх пăхнинчен килет. Янгорчино колхозĕн сысна ферминче ама сыснасенчен ҫăвăрсем илес тата вĕсене пăхса ҫитĕнтерес ĕҫ ăнăҫлăн пулса пыман: ҫамрăк ҫăвăрсем нумай вилнĕ, сыснасен тупăшĕ сахал пулнă. Кăҫал колхоз сыснасене пăхас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнчĕ. Ăшă вите, лайăх апат-ҫимĕҫ пĕҫерсе ҫитермелле турĕ. Свинаркăсем нумай хут лайăхрах ĕҫлерĕҫ. Ҫакна пула ĕҫĕн результачĕ те пачах урăхла пулчĕ. Фермăри ама сыснасенчен кăҫал план тăрăх 99 ҫăвăр илмелле пулсан, 115 ҫăвăр илнĕ, вĕсене пурне те лайăх пăхса ӳстернĕ.

Ҫавăн пекех Катăшри Чапаев ячĕпе тăракан колхозра та ĕнесене лайăх пăхса усранине пула кăҫал кашни сăвакан ĕне иртнĕ ҫулхинчен икĕ хут нумайрах сĕт панă.

Фронтпа ҫĕршыв выльăх-чĕрлехĕн продуктивноҫне ӳстерме хушаҫҫĕ. Выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноҫне ӳстерессиферм ăсенче ĕҫлекен колхозниксемпе колхозницăсен чыслă обязанноҫĕ пулса тăрать.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Совет Союзĕпе Мексика пĕр-пĕринпе ҫĕнĕрен дипломатиллĕ ҫыхăну тытма пуҫлани

Мексика Правительстви Совет Союзĕпе Мексика хушшинче ҫĕнĕрен дипломатиллĕ ҫыхăну тытма пуҫлама тата пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем яма сĕннине Совет Правительстви йышăннă. Ҫак ыйту тăрăх икĕ правительство пĕр-пĕринпе калаҫса таталнине Мексикăн США-ри посолĕ Нахэра тата Совет Союзĕн США-ри посолĕ Литвинов юлташ пĕр-пĕрин патне нотăсем ярса ҫирĕплетсе хунă.

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Нахэра господин Литвинов юлташ патне ҫакăн пек нота янă:

«Эпир нумаях пулмасть пĕр-пĕринпе калаҫнă май эпĕ халь ҫакна тепĕр хут каласа паратăп: Сирĕн Превосходительствăн Правительствине хавхалантаракан тĕллевшĕнех тăрăшакан манăн Правительство Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе ҫĕнĕрен дипломатиллĕ ҫыхăну тытма пуҫлама килĕшет. Ҫавăнпа манăн Правительство хăйĕн Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне ярĕ, вăл Совет столицинче пурăнĕ; ҫакăнпа пĕр вăхăтрах Сирĕн Превосходительствăн Правительстви ҫав ранглă миссин пуҫлăхне ярĕ, вăл Мексика Республикин столицинче пурăнĕ».

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Литвинов юлташ Нахэра господина ҫакăн пек ответлă нота янă:

«Ҫакăнпа эпĕ Сирĕн ноябрĕн 10-мĕшĕнче янă нотăна илнине палăртса паратăп. Ҫав нотăра эсир хăвăр нумаях пулмасть ҫакăн ҫинчен сăмахпа каласа панине: Мексика Правительстви Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе ҫĕнĕрен дипломатиллĕ ҫыхăну тытма пуҫласшăн тата пĕр-пĕрин патне Чрезвычайнăй Посланниксем тата Полномочнăй Министрсем ярасшăн тесе каланине — тепĕр хут ҫирĕплетсе пама кăмăл турăр. Эпĕ Сире ҫакăн ҫинчен калама полномочи илнĕ: манăн Правительство, Мексика Правительствине хавхалантаракан сăлтавпах хавхаланса ĕҫлекенскер, Мексика Республикипе ҫĕнĕрен йĕркеллĕ дипломатиллĕ ҫыхăну тытма пуҫлама тата пĕр-пĕрин патне Чрезвычайнăй Посланниксем тата Полномочнăй Министрсем яма килĕшет».

СССР Наукăсен Академийĕн юбилейлĕ сессийĕ хупăнчĕ

СВЕРДЛОВСК, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Наукăсен Академийĕн юбилейлĕ сессийĕн паянхи ирхи ларăвĕнче академик Орбели «СССР Союзĕнчи биологи наукисем 25 çул хушшинче аталанса пыни çинчен» доклад туса панă.

Унтан Совет Союзĕнчи геологи науки тунă çитĕнӳсем çинчен вырăссен чи ватă геологĕ академик Обручев доклад туса панă.

Сессин каçхи ларăвĕнче гуманитарнăй наукăсем енĕпе докладсем итленĕ. Сесси участникĕсем академик Митин «СССР Союзĕнчи философи науки 25 çул хушшинче» темăпа, Греков тата Тарле академиксем «СССР Союзĕнчи историллĕ наукăсем 25 çул хушшинче» темăпа, академик Алексей Толстой «Çовет литератури 25 çул хушшинче» темăпа тунă докладсене сесси участникĕсем пысăк интереспа итленĕ.

Академин сессийĕ Сталинграда геройла хӳтĕлекенсем патне салам яма йышăннă. Пĕтĕм тĕнчери ученăйсене чĕнсе каланине сесси пысăк çĕкленӳпе йышăннă.

Академин вице-президенчĕ академик В. П. Волгин историпе философи, чĕлхепе литература отделенийĕсен ячĕпе туслă Иранăн Наукăсен Академийĕн президентне Мохамед Али Форуги профессора СССР Наукăсен Академийĕн хисеплĕ членне суйлама сĕнӳ панă.

Сесси участникĕсем пурте пĕр шухăшпа, хăмăллă пулса Форуги профессора хисеплĕ академика суйланă.

СССР Наукăсен Академийĕн президенчĕ В. Л. Комаров хăйĕн юлашки сăмахĕнче сесси ĕçĕсен итогĕсене пĕтĕçтернĕ, вăл пĕтĕм çĕршывра сесси ĕçне пысăк интереспа сăнаса пынине палăртнă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене фронта аркатасаслă ĕçшĕн мĕнпур участникĕсене татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнсе, академик Комаров СССР Наукăсен Академин юбилейлĕ сессийĕ хупăнни çинчен пĕлтернĕ.

—⊙—

„Правительство наградине тивĕçлĕ пулни татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать“

ЙĔПРЕÇ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). ССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă вăрман промышленность работникĕсем хушшинче Йĕпреç районĕнчи «Красный металлист» колхоз членĕ Афанасий Алексеев пур. Алексеев юлташ чылайранпа ĕнтĕ пирĕн леспромхозра вăрман хатĕрлевĕнче тăрăшса ĕçлет. Иртнĕ çуркунне вăл чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçре пултаруллă кăтартрĕ. Касас енĕпе хăйне панă задание темиçе хут иртерсе тултарчĕ. Алексеев юлташăн пархатарлă ĕçне пирĕн Правительство тивĕçлипе хакларĕ: ăна «За трудовую доблесть» медальпе наградăланă.

Хальхи вăхăтра Алексеев юлташ чугунçул валли вутă турттарнă çĕрте ĕçлет. Ку таринччен 400 кубометра яхăн турттарса кăларнă. Сталин юлташăн докладне сӳтсе явнă хыççăн çĕнĕ обязательство илчĕ: 1943 çулччен татах та 100 кубометр турттарма пулчĕ.

— Совет правительствин хисепне тивĕçлĕ пулни татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать,—терĕ вăл хăйне медальпе наградăлани çинчен пĕлнĕ хыççăн.

П. ФЕДОРОВ,
Леспромхоз директорĕ.

Çулпуçăн сăмахĕсем çине ĕçпе ответлеççĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод коллективĕ, Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, çĕнĕ обязательство илнĕ: ĕç тухăçлăхне планпа пăхнинчен 25 процент ӳстерме, IV-мĕш квартал планне декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнă.

Çак обязательствăсене чыслăн пурнăça кĕртессишĕн халĕ заводра хĕрӳллĕ ĕç пырать. Вагонсем юсакан цехри слесарьсен Мирошниченко юлташ ертсе пыракан бригади сменăри нормăна 400 процент таран тултарать.

Коммунист Высоцкий юлташăн бригади те çак кунсенче пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартать. Пĕр васкавлă задание пурнăçланă чух унăн бригади нормăна 5 хут иртерсе тултарнă.

Фронта ытларах продукци туса памалла — çакăн пек ĕмĕтпе ĕçлеççĕ Токарев юлташ начальник пулса тăракан цехри рабочисемпе работницăсем. Вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем — двухсотниксемпе трехсотниксем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Трехсотниксем Черный, Мошницкий, Миневич тата Савченко юлташсем кунран кун ытларах продукци туса параççĕ.

Çулпуç доклачĕ хыççăн вăйланса пыракан ăмăрту Соколовский юлташăн цехĕнче те лайăх результатсем парать. Цехри слесарьсемпе станочниксенчен чылайĕшĕсем нормăна 200—300 процент тултараççĕ. Яковлевпа Янцкий слесарьсем тата Николаева станочница нормăран 3-шер хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Утильцехри токарь, комсомолец—стахановец И. Глыбчак, производствăра отечественнăй вăрçă кунĕсенче ĕçлеме тытăннăскер, Сталин юлташăн доклачĕпе палланнă хыççăн татах та тухăçлărах ĕçлет. Кашни кун тăватă норма—çакăн пек унăн ĕç тухăçлăхĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Укерчĕк çинче: Пирĕн земляк майор В. Я. Яковлев хăйĕн юлташĕпе пĕрле. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Яковлев юлташа «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградăланă.

Пехота хĕçпăшалĕн вăйĕ

Пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Тăшманăн вăйĕсене пĕр участокра пухса тăма, суя маневрсем тунипе унăн вăйĕсене урăх çĕрелле пăрса яма Кошевой полковникăн чаçĕсене приказ панă. Анчах нимĕçсем пирĕн чаçсен сулахай флангĕнчи боецсене хирĕç контратака пуçланă. Фрицсен 100 автоматчикĕ Синкевич сержантăн икĕ батальон хушшинче тăракан отделенийĕ çине тапăнса кĕнĕ. Синкевич отделенийĕнче пĕр ручной пулемет, 6 винтовка тата икĕ автомат пулнă. Тăшманăн вунă хут ытларах йышлă вăйне уççăнах курса тăнă пулин те, сержант Синкевич тата унăн отделенийĕнчи боецсем çухалса кайман; хăйсен хĕçпăшалĕсем пĕр чăрмавсăр пересси не çирĕппĕн шанса, вĕсем тăшман çывхарасса кĕтнĕ. Отделени лайăх маскировка тунă окопра ларнă. Синкевич чи малтанах боецсене тĕрĕс вырнаçтарса тухнă, хăй окоп варрине вырнаçнă, унăн çывăхĕнче ручной пулемет пулнă. Хăйĕнчен сылтăм енне вăл икĕ снайпера вырнаçтарнă, автоматчиксем отделени флангĕсенче пулнă. Çапла тунипе вăл отделение ертсе пыма хăйне валли лайăх майсем туса хунă. Кашни боец командирăн малтанах калаçса татăлнă паллисене тĕплĕн пĕлсе тăнă тата тĕл пенĕ.

Нимĕç автоматчикĕсем малаллах куçнă. Отделени, хăй ăçта вырнаçнине палăртас мар тесе, пĕр сас-чĕвĕ те кăларман. Тăшман автоматчикĕсен пысăк пайĕ окопран 150 метра çывхарсан çеç ручной пулеметчик, автоматчиксем тата стрелоксем пĕр харăссăн тăшман çинелле пеме тытăннă. Снайперсем чи малтанах унтер-офицерсене пенĕ. Отделенири боецсем кĕтмен çĕртен тата харăссăн пенипе сахалтан та нимĕçсен 30 салтакĕ ӳкнĕ. Сывă юлнă гитлеровецсене çакă хăратса пăрахнă, вĕсем çавăнпа хăвăрттăн каялла чакнă та Синкевич отделенийĕн окопĕ çине çил-тăвăллăн персе тăма пуçланă.

Сержант çухалса кайман. Вăл отделенири боецсене малтанах хатĕрлесе хунă запасри окопа куçарнă. Нимĕç автоматчикĕсем пушă окоп çине çаплах вăйлăн персе тăнă. Синкевич, нимĕçсене улталас тесе, кивĕ окоп çине темиçе каскă кăларса тăратнă. Нимĕçсем унта татах та вăйлăнрах пеме пуçланă. Сехете яхăн иртсен, нимĕçсем çĕнĕ контратакăна куçнă. Синкевич отделенийĕнчи боецсем гитлеровецсене хирĕç флангран вирлĕн персе тăнă. Нимĕçсем çакна чăтса тăрайман, хăйсен 50 ытла виллине пăрахса хăварса, каялла тарнă.

Пирĕн 10 воин çакă питех те пысăк çĕнтерĕве вăрçă ĕçне тĕплĕн пĕлнипе тунă. Хăйсен хĕçпăшалне отлично вĕреннисе алла илни тата унăн вăйĕ çине шанни вĕсен кĕрешӳри çирĕплĕхĕпе паттăрлăхне ӳстернĕ.

Пехота хĕçпăшалĕн вăйне шанса тăрасси Кошевой полковникăн чаçĕнчи мĕнпур боецсен йăлине кĕнĕ. Мĕншĕн тесен часа пынă çĕнĕ çынна пирвайхи кунтан пуçласах пехота хĕçпăшалне тĕплĕн вĕрентеççĕ, унăн çапăçури пахалăхĕпе паллаштараççĕ.

Подразделенисен командирĕсем винтовкăсемпе автоматсен, пулеметсемпе минометсен вăйне артиллерипе пĕрле усă курма тата вĕсене хăй вăхăтĕнче ĕçе яма пĕлеççĕ. Нумаях пулмасть пĕр участокра Кошевой полковникăн чаçĕнчи боецсем атака тунă. Пирĕн позицисем патне тăшманăн 15 вăтам танкĕ çывхарнă, кашни танк çинчех 20-шер нимĕç автоматчикĕсем пулнă. Нимĕçсем Котов старши лейтенантăн отрядне атакăланă, çав отрядра 50 боец пулнă. Отрядăн вйçĕ противотанковăй тупă, çавăн чухлех танксене хирĕç пемелли хĕçпăшалсем, пĕр станковăй тата темиçе ручной пулемет, автоматсемпе винтовкăсем пулнă. Нимĕçсем танксем çинчен пысăк мар десантсем пăрахса, танксене хирĕç кĕрешмелли пирĕн средствăсем ăçта вырнаçнине шыраса тупма, кайран пĕтĕм танксен вăйĕпе атакăна куçма шутланă. Старши лейтенант Котов тăшманăн шухăшне тавçăрса илнĕ. Нимĕçсен пирвайхи танкĕсем пирĕн позицисем патне çывхарма пуçласанах, вăл вĕсем çине ручной тата станковăй пулеметсенчен пеме приказ панă. Танксем çине хăпарса ларнă автоматчиксене тĕл пенипе пĕтерсе тăкнă, çав вăхăтрах противотанковăй тупăсемпе хĕçпăшалсенчен пемен. Десантниксене çухатнă пирки, нимĕç танкĕсем каялла çавăрăннă. Котов юлташ приказ панипе шăп çав вăхăтра танксене хирĕç пемелли хĕçпăшалсем кĕрлеме тытăннă. Вĕсем танксен çĕмĕрĕлме пултаракан чаçĕсем тата гусеницисем çине пенĕ. Виçĕ танка стройран кăларнă.

Нимĕçсем иккĕмĕш хут десант пăрахма шут тытса, юлашки 12 танкĕпе атака пуçланă. Ку расра чи малтанах ручной тата станковăй пулеметчиксем, стрелоксем пеме тытăннă. Пирвайхи черетпе пенĕ хыççăнах тăшман автоматчикĕсен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисем танксем çинчен сике-сике анса, тарма пикеннĕ. Çак вăхăтра Котов юлташ танксене хирĕç кĕрешмелли мĕнпур средствăсене хута янă, тăшманăн икĕ танкĕ çавăнтах арканнă. Пирĕн пехотинецсем танксен хӳттипе малалла куçнă, тĕлли-паллисĕр чупакан гитлеровецсем вĕсене асăрханă та каялла тарма пуçланă. Старши лейтенант Котов васкавлăн минометсен батарейипе çыхăннă, вĕссне ăçта пемеллине кăтартса панă. Каялла таракан нимĕçсем кĕçех вуншар мина айне пулнă. Пехота хĕçпăшалĕсенчен вăйлăн персе тăнă çĕре пырса лекнĕ пирки, нимĕçсен çĕмĕрĕлмесĕр юлнă танкĕсем каялла тарма пикенсе пăхнă. Анчах тарма май пулман: 12 танкран 6-шне персе çĕмĕрнĕ, 4-шне çунтарса янă. Икĕ танк çеç хăтăлса юлнă. Пулеметсен тата минометсен вăйĕпе çак çапăçусем вăхăтĕнче нимĕç автоматчикĕсемпе пехотинецĕсене 500 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

Вăл çапăçусем çакна уççăн кăтартса параççĕ: тăшманăн танксемпе тăвакан атакисене сирсе янă тата танксем çинчен пăрахнă десантсене пĕтерсе тăкнă çĕрте пехота хĕçпăшалĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн чаçри боецсем çар техникине вĕренес ĕçе пĕр чарăнусăр туса пыраççĕ. Çапăçусем хыççăнхи пушă вăхăтăн кашни минутипе усă кураççĕ. Хĕçпăшалăн материальнăй чаçне вĕрентесси тата унпа çапăçура мĕнле усă курмаллине вĕрентесси çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхатпăр. Занятисене иртермелли тĕп материал вăл — тин çеç туса иртернĕ çапăçусен опычĕ пулса тăрать. Вĕренессе боецсем çеç мар, командирсем те вĕренеççĕ. Пирĕн хĕрлĕ ялавлă чаçăн çапăçури çитĕнĕвĕсене чи малтанах çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ. Эпир кашниех хамăрăн хĕçпăшалăн вăйне çирĕппĕн шанса тăратпăр, хĕçпăшала лайăх сыхласа усратпăр тата унпа çапăçусенче ăнăçлăн, пĕлсе усă куратпăр.

Майор В. ЯКОВЛЕВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ ХĔРЛĔ ÇАР.

Танксен колоннисене тума

ЙĔПРЕÇ. Колхозниксемпе колхозницăсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. «МОПР» колхоз членĕ 50 çулхи ватă колхозник Ефим Федоров танксен колоннине тума 500 тенкĕ укçа хывса, çапла каларĕ:

— Эпир хамăр вăйпа танксен çак хăватлă колоннине туни— тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма пулăшать. Манăн ывăл фронтра тăшманпа çапăçса, геройла вилĕмпе вилчĕ. Манăн ывăлшăн танксен «Колхозник Чувашии» колонни тăшмана тивĕçлипе тавăртăр.

Ферма заведующийĕ Агрипина Земскова танксен колоннине тума 150 тенкĕ пачĕ. «МОПР» колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума пурĕ 6000 тенкĕ укçа пухнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисен Туниса Чад кӳлли районĕнчен пыракан виççĕмĕш моторизованнăй колоннипе 1-мĕш тата 8-мĕш армисем хушши халĕ 400 мильăна яхăн.

Генерал Андерсон ертсе пыракан 1-мĕш арми çаплах малалла куçса пырать.

Тунисра союзниксен войскисемпе тĕнĕл держависен войскисем пуçласа вичĕ районра тытăçса илнĕ: Тинĕс çыранĕн районĕнче, унтан кăнтăралларах Медь Эль—Джерба районĕнче тата унтан кăнтăралларах вырăнта, Тунис мемлокĕ текенскерте, тытăçса илнĕ. Туниса тĕнĕл çĕршывĕсенчен çĕнĕ вăйсем пырса тăраççĕ.

Америка войскисем Тунисалла куçса пынă чухне вĕсем çумне французсен пиншер çынлă отрячĕсем пырса хутшăннă.

ДАРЛАН ЧĔНСЕ КАЛАНИ ТАТА ПЕТЭН ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Дарлан чĕнсе каланине, Мароккăри радио сарнăскере, пичетлесе кăларнă. Дарлан шухăшĕпе, Францин «ирĕклĕ зонине» оккупациленĕ хыççăн Петэн «хăйĕн чăн-чăн шухăшĕсене» Франци халăхĕ патне çитерме пултарайман. Кунсăр пуçне мĕнпур çыхăну средствисене нимĕçсем контроллесе тăраççĕ. «Ноябрĕн 9-мĕшĕнче,— тенĕ Дарлан, — Петэн мана, хăй манăн Африкăри ĕçсемпе çырлахнине палăртса, Алжира ячĕ. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче, эпĕ ирĕклĕн ĕçлеме пултараймастăп пулĕ тесе шутласа, Петэн Ногес генерала манăн заместитель пулма уйăрса лартрĕ. Ноябрĕн 13-мĕшĕнче Ногес генерал, эпĕ ирĕклĕнех ĕçлеме пултарнине курса, Петэн пĕтĕмĕшпех ырланă тăрăх, хăйне панă полномочисене пĕтĕмĕшпех мана тавăрса пачĕ.

Çакăн пек лару-тăрăва кура, эпĕ çапла пĕлтеретĕп: Африкăри мĕнпур легионерсем, мĕнпур рангсенчи граждăнла чиновниксем, çарпа флотăн тата сывлăш вăйĕсен офицерĕсемпе унтерофицерĕсем тата ытти чинĕсем, маршала пăхăнса тăма тупа тунăскерсем, ман приказсене пурнăçа кĕртсе пырса, çавăн пек тупа туса сăмах панине хăйсем пурнăçа кĕртсе пыраççĕ тесе шутлама пултараççĕ. Çак решенишĕн эпĕ мĕнпур ответлăха хам çине илетĕп. Çак решенин пĕр тĕллев кăна—империн интересĕсене тата нациллĕ пĕрлĕхе сыхласа хăварасси».

Вишире Петэн заявленине пичетлесе кăларнă. Унта Петэн хăй «нимĕçсемпе пĕрле ĕçлеме» шутланине çирĕплетсе парать. Петэн Дарлан чĕнсе каланине «чăннипех те халăха аркатса ямалли чĕнӳ» тесе ят панă. Петэн хăйĕн шухăшĕсене Франци халăхĕ патне çитерме пултарайманни çинчен каланине вăл хăйĕнчен «мăшкăллани» пулать тесе шутлать. Дарлан Петэн ячĕпе ĕçлет тесе каланине те Петэн сирсе ярать.

ПЕТЭН «АЙĂПЛАНИНЕ» ХИРĔÇ ЖИРО ГЕНЕРАЛ ПАНĂ ОТВЕТ

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мэйл» хаçат çапла пĕлтерет: Жиро генерал çыру пичетлесе кăларнă, унта вăл Петэнăн заявленине татăклăн та çирĕппĕн сирсе пăрахать. Петэн заявленийĕ тăрăх, Жиро генералăн Çурçĕр Африкăри ĕçĕ Петэна сăмах панинчен пачах та урăхла пулса пырать имĕш.

«Манăн тивĕçлĕх—кунта килсе, Францин колониальнăй çарĕ ĕçе татăклă çĕнтерӳ патне илсе çитертĕр тесе, çав çара организацилесси пулса тăнине эпĕ туйнă,—тенĕ çырура.—Çакна эпĕ, Францин ытти нумай офицерĕсем пекех, Франция хăйĕн паттăр союзникĕсем енче татах та тепĕр хут вăрçа кĕме тивĕçлĕ тесе шутласа, çапла турăм. Çакна эпĕ Францин Африкăри çарĕн нумай офицерĕсемпе тата салтакĕсемпе пĕрле турăм. Çав çарпа пĕрле тата хальхи вăхăтра манпа ĕçлекен генералсемпе пĕрле, эпир, союзниксен верховнăй командованийне ертсе пынипе, хаваслăн кĕрешĕве тухăпăр, эпир татăклă наступлени тунă çĕре хамăра шаннă пек хутшăнăпăр. Пире хальхи вăхăтри хĕçпăшал парса тăма сĕннишĕн эпир Рузвельт президента тав тăватпăр. Хăйĕн аслă союзникĕсем—Великобританипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем кӳнĕ çав ырă ĕç çинчен Франция нихăçан та манмĕ».

Дарлан çине мĕнле пăхни пирки Рузвельт тунă заявлени

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Дарлан çине мĕнле пăхни çинчен Рузвельт пресс-конференцире çакăн пек заявлени тунă:

«Эйзенхауэр генерал Çурçĕр тата Хĕвеланăç Африкăра вăхăтлăха тунă политикăллă килĕшӳсене эпĕ ырларăм. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Великобританири халăхсен, çавăн пекех тата ытти мĕнпур пĕрлешнĕ нацисен туйăмĕсене эпĕ лайăх ăнланатăп тата ырлатăп. Пĕрлешнĕ нацисем, юлашки икĕ çул хушшинчи историе шута илсе, Дарлан адмиралпа нимĕнле килĕшӳ те тума май çук тесе шутлаççĕ. Çавăн пекех пĕрлешнĕ çĕршывсен халăхĕсем Виши правительствине Францире те, Францин ытти территорийĕсем çинче те çĕнĕрен ура çине тăратнипе нихăçан та килĕшмен пулĕччĕç. Гитлерпа тĕнĕл держависене пулăшакан французсене хирĕç тăратпăр эпир. Францин пулас правительстви пирки тăракан ыйтăва сӳтсе-явма пирĕн çарта никамăн та нимĕнле полномочи те çук. Франци правительствин пуласлăхне Францири е унăн тулашĕнчи пĕр-пĕр уйрăм çын мар татса парĕ, çак ĕçе ăна пĕрлешнĕ нацисем Франци халăхне ирĕке кăларнă хыççăн французсем хăйсемех татса парĕç. Хальхи вăхăтра Çурçĕр тата Хĕвеланăç Африкăра тунă килĕшӳсем пĕтĕмĕшпех вăрçă обстановкине пула вăхăтлăха кăна тунă актсем пулса тăраççĕ.

Вăрçă тĕлĕшпе тунă хальхи килĕшӳ икĕ тĕллеве пурнăçа кĕртме пулăшрĕ. Вĕсенчен пĕри—пĕр енчен илсен, американецсемпе англичансен пурнăçне çăлса хăварни, тепĕр енчен—французсен пурнăçне çăлса хăварни пулса тăрать. Иккĕмĕш тĕллев—пурнăç тĕлĕшĕнчен питех те паха фактора — вăхăта хамăр алла илесси пулса тăрать. Çав килĕшӳ Алжирпа Марокко территорийĕсене тасатма кирлĕ вăхăта сыхласа хăварма май пачĕ, ахаль пулсан çав ĕç валли пĕр уйăх е икĕ уйăх вăхăт кирлĕ пулнă пулĕччĕ. Çакă вара вăл хĕвеланăçĕнчен Тунис çине, çавăн пекех тата, эпир шаннă пек, Триполи çине наступлени тума вăйсем пухас ĕçе вăраха янă пулĕччĕ. Хальхи операцисенче пĕр куна вăраха яни те нимĕçсемпе итальянецсене вăйлăн хирĕç тăмашкăн тата окопсем чавса выртмашкăн май туса панă пулĕччĕ. Çакă вара эпир çĕнтеричче малтан пиртен питех те пысăк операци туса иртерессине ыйтнă пулĕччĕ.

Хальхи пек хăвăрт наступлени туса пырса, эпир вăхăта пĕр уйăх е ытларах та вăраха ярса наступлени тунă чухнехинчен ытларах çынсем сыхласа хăварма пултаратпăр. Çавăн пекех çакна та палăртмалла: Францин Жиро генерал командир пулса ертсе пыракан войскисем хăйсен çĕршывне ирĕке кăларассишĕн, американецсемпе тата англичансемпе алла-аллăн тăрса, Тунисра противника хирĕç çапăçнă çĕре хутшăнаççĕ.

Дарлан заявленийĕ çак енчен усăллă пулчĕ: вăл «тасату тумалли» вăхăта кирлĕ мар туса хучĕ. Дарланпа вăхăтлăх килĕшӳ туни пĕтĕмĕшпех хальхи вăхăтра çав вырăнта пулса тăнă лару-тăруран килет. Çурçĕр Африкăра нацистсем тĕнчере пуç пулса тăма ĕмĕтленнине хирĕç кĕрешнĕшĕн арестленĕ çынсене пурне те эпĕ ирĕке кăларма ыйтрăм, нацистла правительствăсем тата нацистла идеологсем тунă законсемпе декретсене пурне те пăрахăçа кăларма хушрăм. Унтан килекен сведенисем çакна кăтартса параççĕ: Çурçĕр Африкăра пурăнакан французсем политикăллă ыйтусене пĕтĕмĕшле тăшмана хирĕç пĕрлĕхлĕ фронт туса хурас задачăна пăхăнтараççĕ».

Де Голь заявленийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Де Голль генерал çакăн пек заявлени тунă: «Алжирта сутăнчăк Дарлан тавра пулса иртекен мĕнпур комбинацисем тăван çĕршывран мăшкăллани пулса тăрать. Франци çĕршывĕ чыссăрлăхра çуралмĕ. Эпĕ Кĕрешекен Францин руководителĕ, урăхла каласан, Франци çапăçура чыслăн ирĕке кăларас тесе манпа пĕрлешнĕ мĕнпур французсен руководителĕ пулса юлатăп».

Общинăсен палатинче Криппс тухса калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Стаффорд Криппс общинăсен палатинче король сăмахĕ хыççăн пренире тухса каланă. Союзниксем Çурçĕр Африкăра хăйсем пуçпулса тăма тытăниччен вĕсен вăйлăн кĕрешмелле пулать-ха, тенĕ Криппс. Союзниксен Çурçĕр Африкăри ăнăçăвĕсем чылай шанчăклă преспективăсем уçса параççĕ. Анчах та тĕнĕл держависем çителĕклех вăйлă-ха, вĕсем хирĕç çапма пултараççĕ, çавăнпа та Англире тата пĕтĕм империре вăйсене май пур таранах мобилизацилени кирлĕ.

Çурçĕр Африкăра Дарлан мĕнле вырăн йышăнни çинчен каласа, Криппс Рузвельтăн заявленине вуласа панă тата çапла хушса каланă: «Англи правительствине илес пулсан, де Голлĕн позицийĕ уншăн питех те паллă тата де Голль хăйĕн юлашки заявленине пĕтĕмĕшпех Англи правительствипе килĕшсе тунă».

Кун хыççăн Криппс çапла каланă: çар производствин пур участокĕсенче те ĕç вăйĕпе перскетлĕнрех усă курмалла тăвас тĕлĕшпе правительство тĕрле мероприятисем туса иртерме палăртать, тенĕ. «Пирĕн умра таракан чи пысăк йывăрлăх вăл,—тенĕ Криппс,—подводнăй лодкăсенчен сыхланасси пулать пулмалла».

Çĕнĕ Гвинейăра союзниксем наступлени туса пырасси, тенĕ Криппс, ăнăçлăн малалла пулса пырать. Австралиецсем питех те пысăк çухатусем тӳстернĕ хыççăн японецсем Буна тытса тăма пултараймаççĕ пулмалла. Соломон утравĕсем патĕнчи тинĕсри юлашки çапăçу пирĕн союзникăн флочĕ пысăк çĕнтерӳ тунине уççăн кăтартса пачĕ.

Германипе Италие хирĕç сывлăшра çапăçни пысăк вырăн йышăннине палăртса, Криппс çапла каланă: «Эпир Германипе Итали çине малашне те бомбăсем пăрахассинчен пире нимĕн те чарса тăма пултараймасть. Эпир Çурçĕр Африкăра çирĕпленсе ларсанах итальянецсем хăйсен нимĕç союзникĕсем юлашки темиçе уйăх хушшинче тӳссе ирттернинех тӳссе курĕç».

ЛАВАЛЕ ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ ПОЛНОМОЧИСЕМ ПАНĂ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Государство пуçлăхĕ» пулса тăракан Лавале Петэн чрезвычайнăй полномочисем пани çинчен Вишире официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

Лавале хăй пĕччен алă пуснипех законсемпе декретсем кăларма право панă. (Хăй вăхăтĕнче Петэн çакăн пек майпах хăйĕн вырăнне Дарлана уйăрса лартнăччĕ).

ВЕЙГАНА АРЕСТЛЕНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи влаçĕсен Парижри официальнăй представителĕ çапла каланă: Вейган генерала арестленĕ, вăл халь Германире пурăнать, тенĕ.

ЛАРГО КАБАЛЬЕРĂНА АРЕСТЛЕНĔ

БУЕНОС-АЙРЕС, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Аргентинăри радиостанци çапла пĕлтерет: Германи войскисем Францие пырса кĕрсенех унта Испани республикин премьер-министрĕ пулнă Ларго Кабальерăна тата республикăллă правительствăн премьер-министрĕ пулнă Сантяго Касерес Киоргăна арестленĕ.

Арестленĕ çынсене Испани влаçĕсене параççĕ тесе калаççĕ.

КОРСИКА УТРАВĔ ÇИНЧЕ ОСАДНĂЙ ПОЛОЖЕНИ ТУСА ХУНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Аяччăра тата Корсика çинчи ытти хуласенче те осаднăй положени туса хунă. Вырăнти гарнизонсемпе граждански халăх Корсикăна пырса кĕнĕ Итали войскисене хирĕç ĕçлеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Наркомлесу Чувашской АССР для работы в аппарате требуются: начальник финотдела, ст. инженер по мехтранспорту, ст. инженер—технолог, ст. экономист-плановик, спец. по технике безопасности, секретари и машинистка.

Для работы в предприятиях требуются: плановики, спец. по лесозаготовкам и лесфонду, гл. бухгалтера, служащие и рабочие всех квалификаций. Отоплением и квартирой обеспечиваются.

ИЗДАТЕЛЬСТВУ газеты „Чăваш Коммуни“ требуются: ответ. работник по бумаге, фоторепортер, зав. складами, рассыльные.

Обращаться: Чебоксары, Дом печати, 3 этаж, комната 18.

Утерянную круглую печать Турмышинской леспромартели считать недействительной.

Чувашпромсоюз организует при Учебном Комбинате в г. Чебоксарах курсы по подготовке бухгалтеров и счетоводов.

Условия приема на курсы бухгалтеров: образование не ниже 9-10 классов и год счетной работы по двойной системе бухгалтерского учета. Срок обучения семимесячный. На курсы счетоводов — образование не ниже 7-ми летки. Срок обучения 5 месяцев.

Курсанты обеспечиваются степендией в размере 200 руб. в месяц и, кроме того, получают 50 руб. квартирных.

Начало занятий 1-го декабря 1942 г.

Лица, желающие поступить на курсы, должны получить командировку от ближайшей артели Чувашпромсоюза или непосредственно от Чувашпромсоюза в г. Чебоксарах.

ЧУВАШПРОМСОЮЗ

УПРАВЛЕНИЕ СТРОИТЕЛЬСТВА №4 ГУШОСДОРА НКВД СССР ОБ'ЯВЛЯЕТ НАБОР СЛУШАТЕЛЕЙ НА КУРСЫ ПОДГОТОВКИ ШОФЕРОВ

На курсы шоферов принимаются мужчины и женщины в возрасте не моложе 17 лет, имеющие образование не ниже 4-х классов.

Зачисленным на курсы выплачивается стипендия в размере 200 р. и предоставляется питание.

Иногородние обеспечиваются общежитием.

Срок подачи заявлений—до 15 декабря 1942 г.

Начало занятий—20 декабря.

Срок обучения—полтора месяца.

За всеми справками обращаться ежедневно, кроме выходных дней, по адресу: ул. Калинина д. № 51, отдел кадров.

Письменные заявления направлять по этому же адресу.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11609

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф 6. 58 84 п.